25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

1943 ЯНВАРЬ 14 КĔÇНЕРНИКУН 11(6248) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине çуракине хатĕрленсе çитнипе кĕтсе илер!

Çĕрпӳ районĕнчи Тĕнсĕр ялсоветĕнчи „Чăваш. ЦИК" колхоз членĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем патне çырнă çыру

Пирĕн колхоз вăрçăчен Çĕрпӳ районĕнчи чи малта пыракан колхозсенчен пĕри шутланнă. Колхозра, ялхуçалăх ĕçĕсем кашни çулах ӳсе пынă. Ахă ĕçĕсене тырпулсене пухас ĕçе начар туса ирттернĕ. Агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртеймен, тырă вырнă чухне тата ăна çапнă чухне тырпула нумай тăкакланă. Çапла пулă колхоз ӳсетлĕхне сахаллатнă. Колхозниксем хирĕсенче тырпул сахал пухса илнĕ, ялхуçалăх продукчĕсем парас тĕлĕшпе колхоз государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене вăхăтра пурнăçласа кĕртсе пыраймасăр, пирĕн ĕçкунĕсем тăрăх сахал валеçсе панă.

Пирĕн тăван çĕршыва умне тăшман хаяр хăрушлăх тухса тăчĕ... пирĕн çĕршыва шалалла кĕме хăтланса тапăçланнă вăхăтра, эпир, Совет Союзĕнчи пĕтĕм колхозлă хресченсем пекех, хамăрăн парти тавра татах та таччăнрах пĕтĕçрĕмĕр, юратнă çулпуç Сталин юлташ чĕннипе, хамăрăн ĕçе вăрçă ыйтнă пек урăхлатса çĕнетрĕмĕр. Пирĕн колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплентĕ, колхозниксем пурте ĕçе активлăн хутшăнма тытăнчĕç. Çапла вара «Чуваш. ЦИК» колхоз 1942 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те иртнĕ çултисенчен нумай лайăхрах туса ирттерчĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, колхозниксем организованнăрах ĕçлерĕç, çавăнпа колхоз хуçалăх енĕпе вăрçăчченхинчен нумай çирĕпрех пулса тăчĕ. Вăрçă условисенче, колхозниксен чылай пысăк пайĕ тăван çĕршыва сыхлама кайнă вăхăтра, туртăм вăйĕ сахалланнă вăхăтра, эпир тĕштырăсене, çĕрулмине, пахча-çимĕçсемпе техникăллă культурăсене пысăк тухăçлăхпа туса илтĕмĕр. Тырпулсене вăхăтра вырса пуçтартăмăр тата вăхăтра çапса илтĕмĕр. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне авăн çапас ĕçсене вĕçлерĕмĕр тата государствăна тырпулпа ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли хамăрăн обязательствăсене пурнăçа кĕртрĕмĕр. Тамбов облаçĕнчи колхозниксен пуçарăвне йышăнса, эпир танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 58 пин тенкĕ укçа хыврăмăр, тăван çĕршыва паттăррăн хӳтĕлекенсене хамăрăн личнăй хуçалăхри запасран тырă тата ытти продуктсем парса пулăшатпăр. Оборона фондне эпир пĕтĕмпе 760 пăт ытла тырă хыврăмăр.

1943 çулта пирĕн, колхозниксен, фронта пулăшас тĕлĕшпе икĕ хут, виçĕ хут вăйлăнрах ĕçлемелле, çĕршыва татах та ытларах продуктсем, промышленность валли чĕртавар памалла. Çак задачăна татса парас ĕçре килес çуракине ăнăçлăн туса ирттерни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Эпир колхозниксен пухăвĕнче çуракине хатĕрленес ыйтăва сӳтсе-яврăмăр, вара çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе кĕтсе илме, ăна ĕçне организованно тата кĕске вăхăтра туса ирттерме, çапла вара 1943 çулта, çанталăк кирек мĕнле тăрсан та, пысăк тухăçлă тырпул туса илме йышăнтăмăр.

Çуракине лайăхрах хатĕрленес тесе, эпир ĕç вăйĕпе туртăм вăйне уйрăм участоксем тăрăх вырнаçтарса тухрăмăр, ответлă çынсене уйăрса лартрăмăр, конкретнăй заданисем палăртрăмăр тата хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илтĕмĕр:

1. Мĕнпур культурăсен вăрлăхĕсене 566 центнер хатĕрлесе, акма юрăхлă кондицие çитермелле. Çак задачăна эпир пурнăçа кĕртрĕмĕр те ĕнтĕ. Вăрлăхсем пирĕн пĕтĕмпех хатĕр тата вĕсене сортласа, тасатса хунă. Клевер вăрлăхĕсем хатĕрлес ĕçре иртнĕ çулта пулнă йăнăшпа шута илсе, кăçал эпир клеверс малтан тилĕтсе хатĕрлесе алăпа шĕкĕлчес ĕçе организацилерĕмĕр.

2. Ялхуçалăх машинисемпе ĕç хатĕрĕсене 1943 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр юсаса çитермелле. Машинăсене юсама кирлĕ материалсем тата хамăрăн пирĕн тимĕрçĕ лаçсене çитерлĕхсе пур.

3. 1943 çулта уйсене тислĕк 4.200 лавран кая мар, вăл шутран 2.600 лавран кая мар хĕл вăхăтĕнче кăлармалла. Тислĕке кашни кун турттарма эпир кашни бригадăран 2-шер лаша уйăртăмăр, ялан ĕçлеме колхозниксем çирĕплетрĕмĕр, тислĕк кăларалли участоксене палăртрăмăр. Выльăх-чĕрлĕх фермисене тата ... тислĕк пухса хатĕрлемелли плана пурнăçа кĕртнĕшĕн ферма заведующийне тата старши конюха ... ĕçкунĕ памалла, задание 10 процентран кая мар ирттерсе пынăшăн ... ĕçкунĕ памалла туса палăртрăмăр. Çак мероприятисене пула эпир хирсене 860 лав ытла тислĕк кăлартăмăр та ĕнтĕ.

4. Кĕл планпа 76 центнер пухмалла пулсан, ăна 90 центнертан кая мар пухма тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 91 центнертан кая мар пухма обязательство илтĕмĕр. Эпир çак тĕлĕшпе ялан ĕçлекен колхозниксене палăртса хутăмăр, вĕсем кĕл пухнипе пĕрлех кашни колхозник килĕнчен пухса илнĕ кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне шута илсе пыраççĕ. Колхозниксем пухса панă кашни центнер кĕлшĕн тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕшĕн ĕçкунĕсем памалла турăмăр.

5. Çĕрпӳ хулинчен 90 центнертан кая мар фекали турттарса тухмалла. Çак ĕç валли эпир кашни бригадăран пĕрер лаша тата икшер çын уйăртăмăр. Турттарса тухнă кашни центнер фекалишĕн колхозниксене 1,5 ĕçкунĕ çырса паратпăр. Эпир фекалие кивĕ улăмпа хутăштарса, компост туса усă курма йышăнтăмăр, мĕншĕн тесен çакă удобрени хисепне нумайлатать.

6. Ялхуçалăх снабжени склачĕсенчен 1943 çулхи февралĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр 300 центнер минераллă удобрени турттарса тухмалла. Вĕсемпе эпир пуринчен малтан техникăллă культурăсене — кок-сагыза, махоркăна апат панă çĕцте усă куратпăр, çав культурăсене 1943 çулта чылай нумайрах акса хăваратпăр.

7. 135 гектар çĕр лаптăкĕ çинче юр тытса хăвармалла, планпа 100 гектар палăртнă. Юр тытса хăварас ĕçре эпир çатракаран тунă щитсемпе усă куратпăр, ыраш улăмĕнчен те щитсем туса хатĕрлетпĕр. Çавăн пек щитсем эпир кашни бригада валлиех 500 щитран кая мар хатĕрлетпĕр.

8. Мартăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр транспорт инвентарĕсене юсаса тата çĕнĕрен туса çитермелле. Çак ĕç валли эпир ялан ĕçлеме 3 платник уйăрса хутăмăр, кирлĕ материалсене хатĕрлерĕмĕр.

9. Кивĕ хăмăт-пăявсене йĕркене кĕртмелле тата çĕнĕрен тумалла. Вĕсем запасра та 25 процентран кая мар пулмалла. Çак ĕçе эпир кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса çитерме пултăмăр.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пирĕн бригадăсем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозница юлташсем! Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнин уявĕ çывхарса килет. Совет войскисем фронтăн чылай участокĕсенче ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Тăван çĕршыв умĕнчи пирĕн тивĕçлĕх — тăшмана хăвăртрах аркатса тăкма хамăрăн хĕрӳллĕ ĕçпе фронтовиксене пулăшасси. Çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе çитни — эпир фронта вăйлăн пулăшни пулĕ. Социализмлă ăмăртăва сарса ярар, Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун тĕлне çуракине пĕтĕмĕшпех хатĕрленсе çитер, çурхи ака ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерсе, 1943 çулта пысăк тухăçлă, вăрçă вăхăтĕнчи пек тырпул туса илме никĕс хывса хăварар!

Колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ хушнипе алă пуснă:

Колхоз председателĕ **Г. О. Скворцов**, счетовод **Г. И. Иванов**, бригадирсем: **В. С. Ишутов, П. А. Антонов, Е. Е. Сайкина, А. Н. Николаев, Н. Е. Кутейкин**, ферма заведующийĕ **И. С. Семенов**, старши конюх **П. И. Плотников**, кладовщик **П. П. Петров**, колхозниксем: **В. С. Степанов, П. Ипполитова, А. Чайкина, З. И. Гаврилова, М. Зуева, А. М. Ильин, М. Гордеева, М. Иванова.**

ВĂРЛĂХ СОРТЛАÇÇĔ

СЕНТЕРВĂРРИ. Юртакасси ялсоветĕнчи «Искра» колхоз членĕсем çуракине хатĕрленеççĕ. Вăрлăхлăх уйăрнă тырăсене сортласа хума бригада тунă. Вăл бригада халь кулленех тимлĕн ĕçлет. Вăрлăхлăх тырра сортланă çĕрте Е. Гаврилова, У. Платонова колхозниксем кулленхи задание 130—140 процент тултараççĕ.

Колхоз çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытти ĕçсене те хăвăрт туса ырать. Кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумаййăн пуçтараççĕ, паянхи куна уя 200 лав ытла тислĕк кăларнă.

Е. ЧЕЛЕВЕРОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Январĕн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Çурçĕр Кавказра** наступлени туса пырса, **Ессентуки** хулипе чугунçул станцине тата **Ессентукская, Левокумский, Каррас, Николаевская, Бештаупик** ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Зимовники районĕнче пирĕн войскăсем **Ново-Николаевская, Харьковский, Майорский, Курмоярский** ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнĕ.

Дон шывĕн анатри районĕнче тата **Центральнăй фронтра** пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Январĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 5 танкне тата 30 ытла автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 5 батарейине пусарса лартнă, 2 поезда çĕмĕрнĕ, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем нимĕçсене темиçе урамран хĕссе кăларнă, вĕсен 20 дзочĕпе 37 блиндажне йышăнса илнĕ. 2 оруди, 19 пулемет, 4 противотанковăй пăшал, автоматсем тата винтовкăсем тытса илнĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем, наступлени туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр участокра противник чылай йышлă танксемпе пехотăна контратакăна кĕртсе янă. Хаяр çапăçу кунĕпех пынă. Нимĕçсем, совет чаçĕсене кирек мĕнле çухату тӳссе те пулин меллĕ рубежсенчен хĕссе кăларма тăрăшса, çапăçăва хăйсен резервĕсене кĕртсе янă. Пирĕн боецсем хăйсене çирĕп хӳтĕлесе противника халран янă, унтан вара ăна вăйлăн пырса çапнă. Тăшманăн 2.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, нимĕçсен 40 танкне çитти тата 12 орудине пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă тата противникăн контратакисене сирсе тăнă. Великие Луки хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем Н-ски часть хӳтĕлекен позицисене хирĕç контратака тунă. Тăшманăн пехотине пирĕннисем пулеметсемпе тата пăшалсемпе персе кĕтсе илнĕ, тăшманăн пехоти вара çĕр çине выртнă. Çав вăхăтрах нимĕç танкĕсем минăсем хурса тухнă вырăна пырса кĕнĕ. Икĕ танк минăсем çине пулса сирпĕнсе кайнă, ытти пилĕк танка пирĕн артиллери персе çĕмĕрнĕ. Каçпала гитлеровецсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен 200 вилли ытла выртса юлнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем противника атакăланă та нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă тата 14 пулемет, хăй тĕллĕн çӳрекен тупă, 40 автомат, нумай винтовка тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем, противник хирĕç тăнине сирсе ярса, ăнăçлăн малалла куçса пынă. Нимĕçсем хăйсен çапса лӳчĕркенĕ чаçĕсене йĕркене кĕртес тесе пĕр меллĕ рубежра тытăнса тăма хăтланнă, анчах та пирĕн танковăй чаçсемпе кавалери чаçĕсем вĕсене унтан хăваласа янă. Н-ски кавалери чаçĕсем, каялла чакакан противника хăваласа пырса, 200 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă, 7 оруди, 30 автомашина тата продовольстви 4 складне тытса илнĕ. Пирĕн тепĕр часть тăшман пехотин батальонне аркатса тăкнă тата автоматлă 4 тупă, 4 миномет, 47 автомашина, ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Орел облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен войскăсем, боеприпассем тата çапăçу техники турттаракан 6 поездне ӳпĕнтерсе янă. Крушенисене пула 5 паровоз, 52 вагон тата 39 платформа çĕмĕрĕлнĕ. Вагонсен ванчăкĕсем айĕнче нумай гитлеровец пĕтнĕ. Тепĕр отрядри партизансем противникăн пысăк вăйĕсене хирĕç çапăçса, нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Нальчик хулинче—Кабардино-Балкар АССР столицинче—тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Пĕлтĕр кĕркунне çак хулана çĕмĕрсе кĕрсе кайсан, гитлеровецсем халăха çаратма тата мирлĕ пурăнакан çынсене вĕлерме тытăнчĕç. Фашистла ирсĕрсем малтанхи кунсенчех Шаулов красноармеецăн арăмне тата унăн 5 уйăхран пуçласа 11 çула çитнĕ пилĕк ачине вĕлерчĕç, Михошалилова, унăн 10 çулхи ывăлне тата хулари ытти нумай çынсене персе вĕлерчĕç. Фашистла пусмăрçăсем шкула çӳрекен 14 çулхи хĕре В. мăшкăлланă, 16 çулхи хĕре Н. пусмăрланă. Пăртак вăхăт иртсен, нимĕç çар влаçĕсем мирлĕ граждансене—вырăссене, кабардинецсене, балкарецсене, осетинсене, грузинсене, еврейсене т. ыт. те—массăллăн вĕлерсе пĕтерме тытăнчĕç. 1943 çулхи январĕн 5-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хулана пырса кĕрсен, эпир хуларан 6 километрта, танксене хирĕç кĕрешмелли шăтăксенче тата инçери масар çинче нимĕçсем касса-ваклаcа пĕтернĕ 600 çынна вилли ытла тупрăмăр. Нумайĕшĕн аллисене, урисене, хăлхисене касса татнă, куçĕсене чиксе шăтарнă. Фашистла палачсем вĕлернĕ çынсем хушшинче çамрăк ачасем нумай. Малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем Нальчик хулинче 2.000 мирлĕ çынна ытла вĕлернĕ. Нимĕç оккупанчĕсем Кабардино-Балкар драмин театрне, педагогика училищине, медицина шкулне, 9 шкула, пионерсемпе октябрятсен çуртне, республика библиотекине, çĕнĕ больницăна, поликлиникăна тата культура учрежденийĕсемпе сыватакан ытти учрежденисене сирпĕнтерсе, çунтарса янă. Варварсем Нальчикăн курорт хулине—санаторисене, кану çурчĕсене, сыватакан кабинетсене çĕмĕрсе, çунтарса пĕтернĕ, хула паркне касса тăкнă, водопровода стройран кăларнă, республикăн культура пуянлăхĕсене нумайĕшне Германие илсе кайнă». Акта Нальчик хулинчи çак çынсем алă пуснă: С. Ифраимов, Л. Ашуров, П. Шабаев, М. Моисеева, Е. Давыдова, А. Либман, П. Ифраимов, М. Шалумов, М. Ифраимов, Ш. Давыдов, Д. Левиев алă пуснă.

Январĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Январĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ тух çĕрле пирĕн войскăсем **Дон** шывĕн анатри районĕнче, **Центральнăй** фронтра тата **Çурçĕр Кавказра** малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем пĕр участокра хулан хĕвеланăç хĕррине пырса тухнă. Урамсенче, картишсенче, кашни çуртрах вăйлă çапăçусем пынă. Противник умлăн-хыçлăн ултă хут контратака тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

* * *

Дон шывĕн анатри районĕнче пирĕн войскăсем наступлени туса пынă. Пĕр участокра нимĕçсем пехотăпа танксем нумай пухса тăратнă та пирĕн чаçсене хирĕç контратака тунă. Малтан противникăн танкĕсем кăштах малалла куçнă. Унтан пирĕн войскăсем хăйсен вăйĕсене урăхла вырнаçтарса тăратнă та гитлеровецсене каялла сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем тӳстернĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне çити тата 7 орудине пĕтерсе тăкнă, 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Пирĕннисем 8 оруди, 30 автомашина, нумай винтовка тата боеприпассемпе продовольстви склачĕсене тытса илнĕ.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра противник хăйĕн икĕ отрядне пирĕн Н-ски чаçăн оборонин малти хĕррине разведка тума янă. Пирĕн подразделенисем, артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе, противникăн отрячĕсене сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр Кавказра совет войскисем, нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла куçса пынă, вĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Н-ски стрелковăй чаçăн боецĕсем, танкистсемпе çыхăнса кĕрешсе, противника тĕреклетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Трофейсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксем çĕрле нимĕçсем йышăннă чугунçул станцине кĕрсе кайнă та боеприпассем тиенĕ поезда сирпĕнтерсе янă.

* * *

Старши лейтенант Киселев ертсе пыракан самолетсен групппи противникăн Краснодар хулинчи аэродромне тапăннă. Летчиксем сасартăк аэродром тĕлне пырса тухнă та противникăн аэродромри самолечĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Çав кунах çав аэродрома тата темиçе хутчен тапăннă. Çĕр çинче мĕнпурĕ нимĕçсен 10 самолетне пĕтерсе тăкнă, 30 самолетне çити сиенленĕ. Унсăр пуçне сывлăшри çапăçура противникăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Вилейски облаçри темиçе районра кĕрешекен партизансен отрячĕсем пĕр уйăх хушшинче противникăн 28 поездне ӳпĕнтерсе янă. Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем çав крушенисене пула техникăпа чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Аяларахра Воронеж облаçĕнчи Смаглеевка ялĕнче нимĕçсемпе итальянец ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Пирĕн яла тытса илсен, гитлеровецсем мĕнпур халăха площаде пухрĕç те пурне те çарамаслантарчĕç, унтан ухтарчĕç. Площадьре çынсене ухтарнă вăхăтра фашистла мародерсем килсенче хуçаланса çӳренĕ, кладовойсене кĕрсе шыранă тата пур хаклă япаласене те илсе тухнă. Нимĕçсемпе итальянецсем хĕрарăмсемпе хĕрсене тыта-тыта пусмăрланă. Усĕр салтаксен ушкăнĕ Наталия Ловованна, хăйĕн хĕрĕсем хутне кĕнĕскере, персе вĕлерчĕ. Нимĕç бандичĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлă итальянецсем пур колхозниксене те тенĕ пекех çаратрĕç, вĕсенчен ĕнисене, сурăхĕсене, сыснисене, чăххисене, продукчĕсене тата тумтирĕсене, кĕпе-йĕмĕсене, атă-пушмакĕсене туртса илчĕç. Гитлеровецсем колхозăн ялхуçалăх инвентарьне пĕтерсе тăкрĕç, лашасене, майраккаллă мĕнпур выльăха тата 250 центнер тырра илсе кайрĕç. Вĕсем пирĕн культура учрежденийĕсене аркатса тăкрĕç, шкулсенче сĕтел-тенкелсене, партăсене çунтарса ячĕç, вĕренмелли кабинетсен оборудованине аркатса тăкрĕç, шкул библиотекине çунтарса ячĕç. Каялла чакнă чухне бандитсем тулли мар вăтам шкулăн икĕ çуртне сирпĕнтерсе ячĕç, икĕ магазина тата нумай колхозниксен çурчĕсене çунтарса ячĕç. Эпир Смаглеевка ялĕнчи колхозниксем, хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çара пите хавас кĕтсе илтĕмĕр. Совет боецĕсене вĕсем пире 1943 çула нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсен пусмăрлăхĕ айĕнче мар, ирĕклĕ совет граждансем пулса кĕтсе илме май панăшăн тав тăватпăр». Смаглеевка ялĕнчи граждансем ыйтнипе çаксем алă пуснă: Ф. Вябкин, З. Фисенко, А. Бондаренко, П. Иванов, С. Белоганцев, М. Шептухина, А. Половникова, Ф. Пономарева, И. Козинченко, А. Цимбалева, П. Пюхинский т. ыт. те.

ЧĂВАШ АССР СОВНАРКОМĔНЧЕ

Шупашкар тата Ишлей районĕсенчи колхозсенче транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсене юсас ĕç мĕнле пыни çинчен

Шупашкар тата Ишлей районĕсенчи нумай колхозсенче транспорт инвентарĕсемпе хăмăт-пăявсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕç начар пулса пырать. Çавна пула ку районсенчи колхозсенче транспорт инвентарĕ тата хăмăт-пăявсем лашасен 60—70 процентне кӳлмелĕх çеç пур. Хăшпĕр колхозсенче ĕç татах та начартарах тăрать. Транспорт инвентарьне тата хăмăт-пăява йĕркесĕр тыткаланă пирки колхозсенче лашасен 30 процентĕ ытла ĕçе кӳлĕнмесĕр тăрать. Нумай колхозсенче транспорт инвентарьне, хăмăт пăявсене тăрлавсăр тыткалаççĕ, юсаса тăмаççĕ. Çак ĕçре йĕркелĕх çуккипе пула хăшпĕр колхозсенче лашасем хăмăт тивнĕ пирки ĕçлеме юрăхсăра тухнă. Транспорт инвентарĕ тата хăмăт-пăявсем çитмеççĕ пулсан та, хăшпĕр колхозсенче вĕсене халĕ те колхозниксен килĕсенче тытаççĕ.

Шупашкар тата Ишлей райсовет исполкомĕсем, ку районсенчи çĕрĕç оргăнĕсем колхозсенче транспорт инвентарьне тата хăмăт-пăявсене çителĕклĕ туса хатĕрлес ыйтупа, урапасемпе хăмăт-пăявсене юсаса йĕркене кĕртес, ĕçе юрăхлă тăвас ыйтупа ĕçлемен.

Ĕç çакăн пек тăнине малашне чăтма çук. Транспорт инвентарьне юсаса йĕркене кӳртес, урапасемпе тата хăмăт-пăявсемпе усă курас ĕçре йĕркелĕхпе ответлăх тăвас тĕллевпе, Чăваш АССР Совнаркомĕ Шупашкарпа Ишлей райсовечĕсен исполком председателĕсене Миронова Херсонов юлташсене çак ĕçсене туса ирттерме хушса хăварчĕ:

Вунă кун хушшинче кашни колхозра ĕçе пĕлекен колхозниксенчен транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсене юсакан бригадăсем организацилемелле. Çуркуннехи ĕçсем пуçланнă тĕле кашни ĕçлекен лаша валли транспорт инвентарĕ тата хăмăт-пăяв туса хатĕрлемелле.

Ялхуçалăх ĕçĕнче усă курма палăртнă майракаллă шултăра выльăхсене кӳлме хатĕрсем тăвас ĕçе кашни колхозрах организацилемелле, колхозсен вăл выльăхсене çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен ĕçе вĕрентсе çитермелле.

Хăмăт-пăявсене лашасем çумне, транспорт инвентарьне бригадăсене халлех çирĕплетсе памалла. Хăмăт-пăява тата транспорт инвентарьне ĕçе парса ярас, ĕçрен килсен каялла йышăнас ответлăха колхоз конюхĕсем çине хумалла. Транспорт инвентарĕсене тата хăмăт-пăявсене яланах юсавлă тытасшĕн вĕсен ответлă пулмалла.

Хăмăт-пăявсене тытса усрама ăшă тата типĕ пӳлĕмсем, транспорт инвентарьне лартма витнĕ сарайсемпе лупассем лаша витисем патĕнче уйăрса памалла. Колхозниксен аллинчи транспорт инвентарьне тата хăмăт-пăявсене халех илмелле, вĕсем колхоз бригадисенче пулмалла. Колхозсенче çакăн пек йĕрке тăвас пулать: колхоз председателĕсемпе бригадирĕсен транспорт инвентарĕсемпе хăмăт-пăявсем мĕнле йĕрке тăнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, вăтса çĕмĕрнĕшĕн айăплисене явăçа йĕкчех ответ тыттармалла.

Транспорт инвентарĕсемпе хăмăт-пăявсене юсас тата çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксем валли ĕç нормисем туса, ĕçшĕн мĕнчухлĕ тӳлемеллине палăртса хумалла, вĕсене колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсенче çирĕплетмелле.

ЧАССР Совнаркомĕ Шупашкар тата Ишлей райсовечĕсен исполкомĕсене райпромкомбинатсемпе промысла кооперации артелĕсенче колхозсем валли транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсем юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçе организацилеме хушнă.

Совнарком колхозсене çакăн пек сĕнӳ панă: райпромкомбинатсемпе артельсенче договор тăрăх пĕр вăхăт хушши ĕçлеме колхозниксемпе колхозницăсем уйăрса памалла тата чĕртавар тăратмалла. Колхоз чĕртаварĕнчен туса хатĕрленĕ транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсене промкомбинатсемпе артельсен колхозсене каялла тавăрса памалла. Транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсем тума вĕренсе çитнĕ колхозниксене промкомбинатсемпе артельсенче ĕç пĕтнĕ хыççăн колхозсенче çав ĕçе сарса тыма колхозсене ямалла.

Республикăри ытти чылай районсенчи колхозсенче те транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсем çителĕксĕррине шута илсе, Совнарком райсоветсен исполком председателĕсене колхозсенче транспорт инвентарĕпе хăмăт-пăявсем çителĕклине çителĕклĕ маррине вунă кунлă срокра тĕрĕслесе тухма тата çуракки ĕçĕсем пуçланиччен транспорт инвентарĕсемпе хăмăт-пăявсем çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе практикăллă мероприятисем палăртма хушнă.

Хĕрлĕ Çара кирлĕ продукцие срокчен туса кăларассишĕн

Малта пыракан 172-мĕш номерлĕ заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем çĕршыври мĕнпур предприятисен коллективĕсене Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнине производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме чĕнчĕç. Çак чĕнӳ çине ответлесе, пирĕн республикăри чылай предприятисен коллективĕсем Хĕрлĕ Çар уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç.

1942 çулхи декабрь уйăхĕнчи ĕçсем тăрăх Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе пĕр Халăх Комиссариачĕн иккĕмĕш премине илме тивĕçлĕ пулнă Н-ски завод коллективĕ (завод директорĕн заместителĕ Бунин юлташ) ăмăртăва хутшăнса çакăн пек обязательствăсем илнĕ: **январьпе февраль уйăхĕсенчи производство планĕсене, çавăн пекех тата пĕр халăх комиссариачĕн пĕррремĕш кварталти заданине февралĕн 23-мĕшĕ тĕлне тултармалла.**

Çакăн пек таталлă обязательствăсем заводри уйрăм цехсен коллективĕсем те илнĕ.

Колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 150 пăт тырă хыврĕç

ТĂВАЙ. Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен пуçарăвĕпе, Вăтаялĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем Хĕрлĕ Çар фондне 150 пăт тырă хыврĕç. Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксем патне янă салампа тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунине хавхаланса колхозниксем халь Хĕрлĕ Çар фондне хывма татах та нумай тырă уйăрчĕç.

Г. ФИЛИППОВ.

Самолетсен „Комсомолец Чувашии“ эскадрильине тума 2.115.000 тенкĕ пухнă

Республикăри комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Январĕн 13-мĕшĕ тĕлне Госбанкăн районри отделенийĕсене 2.115.000 тенкĕ хывнă. Самолетсем тума укçа хывас ĕçре çак районсем малта пыраççĕ: Чкаловски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Черенкова) — 618.000 тенкĕ, Октябрьски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Чурмакова) — 185.000 тенкĕ, Етĕрне районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Лягина) — 135.000 тенкĕ, Вăрнар районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Поляева) — 120.000 тенкĕ, Пăрачкав районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Шигаева) — 114.000 тенкĕ тата Первомайски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Николаева) — 100.000 тенкĕ пухнă.

Анчах комсомолăн хăшпĕр районсенчи организацийĕсем самолетсем тума укçа пухас ĕçе кирлĕ пек пуçарса яман, ăна тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Çавна пула Хĕрлĕ Чутай районĕнче 25.000 тенкĕ, Ишлей тата Сĕнтĕр районĕсенче 8.000-шер тенкĕ кăна пухнă.

Г. ПЕТРУХИН.

„Комсомолец Чувашии“ ятлă самолетсем тума

ИĔПРЕÇ, январĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче Йĕпреç леспромхозĕн Дубравнăй пункчĕпе Тымар участокĕнчи вăрман касакансемпе турттаракансен, инженерсемпе техниксен тата служащисен пухăвĕсем пулса иртрĕç.

Сталин юлташăн саламĕсемпе хавхаланса, колхозниксемпе трактористсенчен пример илсе, Йĕпреç леспромхозĕн коллективĕ Хĕрлĕ Çар валли «Комсомолец Чувашии» ятлă самолетсем тумашкăн укçа пухма йышăнчĕ. Январĕн 12-мĕшĕ тĕлне коллектив пурĕ 40.000 тенкĕ пухрĕ. Вăл шутран вăрман касакан стахановецсем: В. Чураков—1.200 тенкĕ, Г. Ефремов—1.000 тенкĕ, вăрман турттаракан стахановецсем В. Ефремовпа С. Иванов—700-шер тенкĕ, Дубравнăй пункт начальникĕ С. Шагуровпа мастер И. Кайманов—600-шер тенкĕ хыврĕç.

Самолетсем тума укçа пухас ĕç малалла пырать.

Йĕпреç леспромхозĕнчи работниксем, хăйсен перекетленĕ укçине «Комсомолец Чувашии» ятлă самолетсем тума парса, фронта пулăшассине вăйлатаççĕ. Вĕсем хăйсен çак примерне Чăваш республикинчи вăрман промышленноçĕн пур предприятисенче те йышăнса илме, «Комсомолец Чувашии» ятлă боевой самолетсем тумашкăн укçа пухнă çĕре вăрман касакансемпе турттаракансене, инженерсемпе техниксене тата служащисене пурне те хутшăнма чĕнеççĕ.

П. ФЕДОРОВ,
Йĕпреç леспромхозĕн директорĕ.

ТАНКСЕМПЕ САМОЛЕТСЕМ ТУМА

СОВЕТСКОЕ, январĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума районри колхозниксемпе колхозницăсем пурĕ 1.665.225 тенкĕ хывнă. Пысăкрах укçа «Прогресс» колхоз—100.000 тенкĕ, «Крестьянская газета» колхоз—52.000 тенкĕ пухса панă. Чемей ялсоветĕнчи «Страж революции» тата «Сеятель» колхозсем кашни шĕрер самолет тума 100.000-шер тенкĕ укçа пухаççĕ.

Боевой машинăсем тума укçа хывнă çĕрте ялти активистсем паха пример кăтартаççĕ. Степан Разин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ С. Андреевпа «Волна революции» колхоз членĕ А. Иванов юлташсем 6.000-шер тенкĕ хывнă.

Районри комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç саралса пырать. Паянхи кун тĕлне пурĕ 26.775 тенкĕ пухнă. Чуманкасси ялсоветĕнчи çамрăксем 12.400 тенкĕ, Пакăш ялсоветĕнчи çамрăксем 11.000 тенкĕ хывнă.

Г. МИХАЙЛОВ,
И. ИВАНОВ.

Ленин орденлă Кольцовка колхозĕнче

ВĂРНАР. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан, Ленин орденлĕ колхозри комсомолецсемпе çамрăксем самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 50.000 тенкĕ хывнă. Кольцовкăри вăтам шкулта вĕренекенсем 4.500 тенкĕ пухса панă. 10-мĕш класра вĕренекен Николай Васянин 1.500 тенкĕ панă.

Г. П.

Столовăй уçрĕç

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Рабочисемпе работникăсен шурнăçри ыйтăвĕсене тивĕçтерсе вĕсене лайăхлă ĕçлеме май парать. Çавна шута илсе, Енĕшкассинчи «Стрела» промартель правленийĕ артель членĕсем валли пĕрлехи столовăй уçрĕ. Столовăй çак кунсенче ĕçлеме тытăнчĕ.

К. ЯКОВЛЕВА.

Вертячий ятлă хуторта нимĕçсем тунă ирсĕр ĕçсем çинчен калакан фотодокументсем

ХĔРЛĔ ÇАР ЧАÇĔСЕМ СТАЛИНГРАД ОБЛАÇĔНЧИ ВЕРТЯЧИЙ ЯТЛĂ ХУТОРА ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ХЫÇÇĂН, СОВЕТĂН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇЫННИСЕМ ВАЛЛИ НИМĔÇСЕМ ТУНĂ ЛАГЕРЬТЕ КРАСНОАРМЕЕЦСЕМПЕ КОМАНДИРСЕН 87 ВИЛЛИНЕ ТУПНĂ. ЛАГЕРЬТЕ ПУЛНĂ 89 ÇЫНРАН НИМĔÇСЕМ 87 ÇЫННА ВЫÇĂХТАРСА, АСАПЛАНТАРСА ТАТА ПЕРСЕ ВĔЛЕРНĔ.

Графика ячĕшĕн кăна тунă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, январĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсен уйăхлăхĕн малтанхи вунă кунĕнче график тăрăх уя 10.500 лав тислĕк, 4.000 лав торф кăлармалла пулнă тата 15 тонна минераллă удобренисем турттарса килмелле пулнă. Анчах ĕç пачах урăхла пулса пырать.

Январĕн 10-мĕшĕ тĕлне колхозсем уя тислĕк 4.200 лав тата торф 200 лав çеç кăларнă. Кунсăр пуçне 150 центнер кĕл, 45 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

Уйăхлăха активлăн хутшăнса, Албахтино, Алманчă, Янчелло ялсовечĕсене кĕрекен колхозсем ĕçе организованно туса пыраççĕ. Албахтино ялсоветĕнчи «Сила» колхоз çак иртнĕ кунсенче уя 1.100 лав тислĕк кăларчĕ, колхозниксем 20 пăт кĕл, 100 пăт кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрлерĕç. Анчах ĕçе çакăн пек организованно туса пыракан колхозсем районра сахал-ха. Хăшпĕр колхозсем уйăхлăха пачах та хутшăнман. Районн вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес тĕлĕшпе кая юлса пырать, нумай колхозсем заданине пурнăçласа пымаççĕ.

Райçĕрĕç пайĕ график туса колхозсене панипе лăпланса ларнă. Колхозсене кулленхи ĕçре тĕплĕн ертсе пыни çук. Çавна пула ĕнтĕ хăшпĕр колхозсем халĕ те уя тислĕк кăларма пуçламан. Уйрăмах, Тусай, Пайсубино, Кушар, Красноармейски, Тĕрер ялсовечĕсенчи колхозсенче вырăнти удобренисем пухса хатĕрлес ĕç начар пырать. Ку ялсовечĕсенчи «Четай», «Жнейка», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çуракине хатĕрленме пуçламан, уя пĕрер лав тислĕк те кăларман.

Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксен колхозсене оперативно ертсе пыма тытăнмалла, графике куллен пурнăçласа пырассишĕн кĕрешмелле.

И. ХАТАЕВСКИЙ.

Ăмăртура малта пыракан училище

Республикăри чугунçул училищисен тата фабрикăпа завод ĕçĕсене вĕренмелли шкулсен социализмлă ăмăртăвĕнче Улатăрти 1-мĕш номерлĕ чугунçул училищипе Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ малта пыраççĕ. Ĕç резервĕсен Главнăй Управленийĕн Коллегийĕпе ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ ăмăртăвăн ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, вĕсене лайăх енĕпе палăртнă. Кунти малта пыракан мастерсемпе вĕренекенсене «Социализмлă ăмăртăвăн отличникĕ» ятлă грамотăпа тата «Государствăн Ĕç Резервĕсен отличникĕ» значокпа наградăланă.

Ăмăртура мала тухнипе палăртни тата лайăх мастерсемпе вĕренекенсене наградăлани Улатăрти 1-мĕш №-лĕ чугунçул училищин коллективне вĕренӳпе ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарнă. Коллектив декабрь уйăхĕнчи социализмлă ăмăрту итогĕсем тăрăх та мала тухнă.

Училищĕри мастерсемпе вĕренекенсем декабрьти производствăллă заказа 132,9 процент тултарнă, çавăншăн 22.227 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Производствăллă заказсене пурнăçланă çĕрте уйрăмах Ю. Чекушкинпа Ю. Спирин вĕренекенсем тухăçлă ĕçлеççĕ. Вĕренӳре лайăх ĕлкĕрсе пынипе пĕрлех, вĕсем декабрьти ĕç нормине 2—3 хут ирттерсе тултарнă, панă заказсене лайăх пахалăхпа пурнăçланă.

Училище çамрăксене производствăна вĕрентес тĕлĕшпе те пысăк çитĕнӳсем тунă. Çамрăксенчен производствăна 33,4 проценчĕ «отлично», 40 проценчĕ «хорошо», 26,6 проценчĕ «посредственно» паллăсемпе вĕренсе пыраççĕ, «начар» паллăсем илекен ачасем пачах та çук. Кунти çамрăксем всевобучăн 110 сехетлĕ программине те ăнăçлăн вĕренеççĕ: пурте пекех «отлично» тата «хорошо» паллăсем илеççĕ.

Училищĕре политмассăллă ĕçе те анлăн туса пыраççĕ. Мастерсемпе агитаторсем докладсемпе калаçусем, политикăллă информацисем пĕрмаях ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Декабрьте, сăмахран, Сталинла Конституци, аслă полководец Сталин çинчен докладсем туса панă, группăсемпе общежитисенче Киров, Чкалов тата писатель Н. Островский çинчен калаçусем ирттерчĕ. Вĕренекенсем фронтовиксемпе, предприятисенчи стахановецсемпе час-часах тĕлпулса калаçаççĕ. Çакăн пек калаçусем вĕренекенсен патриотизмлă туйăмне вăйлатма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Училищĕре вĕрентекенсемпе вĕренекенсен стена хаçачĕ тăтăшах тухса тăрать. Хаçат вĕренӳ, производствăллă практика, пурнăçпа йăла ыйтăвĕсене тĕрĕс тата вăхăтра çутатса пырать.

Комсомолецсем кунта — пысăк вăй. Вĕсене пултаруллă работник Волчек юлташ ертсе пырать. Декабрьте ВЛКСМ ретне 39 çамрăка илнĕ.

Училищĕне уçнăранпа вараx унăн директорĕ пулса) А. Вельчинский юлташ ĕçлет. Вĕренӳпе производствăна лайăх ертсе пынăшăн Вельчинский юлташа «За трудовое отличие» медальпе наградăланă.

Т. И.

ХĔРЛĔ ÇАРА КОМСОМОЛЕЦ ПУЛСА КАЯÇÇĔ

СОВЕТСКОЕ, январĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). ВЛКСМ райкомĕ районри çарĕç комиссариачĕ çумĕнче комсомолăн вăхăтлăх пуçламĕш организацине тунă. Çак организаци 1925 çулта çуралнă çамрăксене Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ вăхăтра ĕçлет. Колхозсемпе учреждениссенче малта пыракан çамрăксем Хĕрлĕ Çара комсомолец пулса каяççĕ. Хальхи призыв вăхăтĕнче пурĕ 46 çамрăк комсомол ретне кĕнĕ.

И. ИВАНОВ.

Юлашки çул

Январĕн 12-мĕшĕнче совет халăхĕ хăйĕн юратнă хĕрне—Совет Союзĕн Геройне Марина Михайловна Раскована пытарчĕ.

Ирхине М. М. Раскован кĕлĕ выртакан урна патне вилнĕ паттăрăн тăванĕсемпе тусĕсем пухăннă. Столицăри ĕççыннисен представителĕсем — заводсемпе фабрикăсенчи стахановецсем, наукăпа искусство ĕçĕнче ĕçлекенсем, Хĕрлĕ Çар янă çынсем—хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен Раскован юлташĕсем пулса тăраканскерсем, Раскована юлашки хут ăсатма пухăннă. Нумайĕшĕн кăкăрĕсем çинче пирĕн çĕршывăн тăшманĕсемпе — нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе сывлăшра тата çĕр çинче çапăçса хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн панă орденсем йăлтăртатса тăраççĕ.

Урна патĕнче венoксемпе чечексем хушшинче йăмăх хĕрлĕ минтерсем çинче М. М. Раскован боевой орденĕсене тата унăн пысăк портретне вырнаçтарса лартнă. Халăх паттăрĕ пулса тăнă ахаль вырăс хĕрарăмĕн хытă та уççăн пăхакан пит куçĕ. Çавăн пек пĕлнĕ ăна унăн сывăх çыннисемпе тăванĕсем, çавăн пек пĕлнĕ ăна паллămар, анчах та ăна чунтан-чĕререн юратнă пиншер çынсем, ĕмĕрлĕхе çавăн пек сăнлă тăрса юлĕ вăл халăх асĕнче. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне тăван çĕршыва пачĕ; çапăçу хирĕсенче пирĕн отечествăн кун-çулĕ çинчен ыйту татăлнă вăхăтра, пирĕн халăхăн никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхĕшĕн хаяр çапăçу пынă вăхăтра М. М. Раскова тăшмана хăйĕн кăкăрĕпе тата юнĕпе пӳлсе лартнă çынсем хушшинче пулнă. Пирĕн тăван çĕршыв, большевиксен партийĕ, аслă Сталин вĕрентсе ӳстернĕскер, вăл боевой ĕçре воин пулса вилчĕ, совет халăхĕ унăн ятне нихăçан та манмĕ.

Урна патĕнче хисеплĕ хурал улшăнсах тăрать. Урна патĕнче юлашкинчен ЦК ВКП(б) тата МК ВКП(б) секретарĕ А. С. Щербаков юлташ, СССР Совнаркомĕн председателĕн заместителĕ Первухин юлташ, МК ВКП(б) секретарĕ Попов юлташ, ĕççынни депутачĕсен Мускав хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ Пронин юлташ, ВЦСПС секретарĕ Николаева юлташ, Совет Союзĕн Маршалĕ Буденный юлташ, Димитров юлташ, Раскован тусĕпе боевой юлташĕ—Совет Союзĕн Геройĕ Гризодубова тата ыттисем те хурал тăраççĕ.

15 сехетре Щербаков, Попов, Пронин, Буденный, Димитров, Шахурин, авиаци генерал-майорĕ Никитин, генерал-полковник Артемьев урнăна постамент çинчен илеççĕ. Траурлă процесси Хĕрлĕ площадь урлă Ленин мавзолейĕ патнелле пырать. Площадьре çар чаçĕсем тата Мускаври ĕççыннисен делегацийĕсем тăрса тухнă, вĕсем Марина Раскована юлашки хут ăсатма пухăннă.

Пронин юлташ траурлă митинга уçать. Вăл ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ ячĕпе тата ССР Союзĕн Совнаркомĕ ячĕпе калама сăмах А. С. Щербаков юлташа парать.

Щербаков юлташ Марина Раскован кĕске, анчах та питĕ чаплă пурнăçĕ çинчен каласа парать. Раскова пирĕн халăхăн чи лайăх паллисене—нимĕнрен хăраманнине, революцилле вăя, хăюлăхпа хастарлăха, пирĕн тăван çĕршыва, большевиксен партипе, аслă Сталина пĕтĕм чунтан-чĕререн парăннине йышăнса илнĕ. Унăн çутă сăн-сăпачĕ, унăн тӳрĕ те çутă пурнăçĕ пирĕн летчиксене тата Хĕрлĕ Çарăн мĕнпур боецĕсене çĕнĕ чаплă ĕçсем тума, совет патриочĕсене пурне те нимĕç захватчикĕсене хирĕç тата вăйлăрах кĕрешме чĕнсе тăрать.

Микрофон патне Совет Союзĕн Геройĕ Штепенко юлташ пырса тăрать. Вăл Хĕрлĕ Çарăн сывлăшри вăйĕсен ячĕпе—хĕçпăшал тĕлĕшĕнчен Раскован хастарлă юлташĕсем пулса тăраканскерсен ячĕпе—гитлерла ирсĕрсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыма, совет çĕршывĕн таса çĕрне вăйлăн хӳтĕлесе тăма тупа тăвать.

Юлашкинчен Совет Союзĕн Геройĕ В. С. Гризодубова сăмах калать. Вăл хăйĕн вăхăтсăр вилнĕ тусĕпе боевой юлташĕ çинчен калать, Раскова хăйĕн пĕтĕм пурнăçне, пĕтĕм вăйне, мĕнпур пĕлĕвĕсемпе талантне пирĕн тăван çĕршыва пачĕ. Гризодубова юлташ совет хĕрарăмĕсене Раскова пек пулма хĕрӳллĕн чĕнет.

Пронин юлташ траурлă митинга хупнă тесе пĕлтерет. Щербаков, Попов, Пронин, Димитров Буденный, Гризодубова трибуна çинчен анаççĕ те, урнăна йăтса, Кремль стени патне илсе пыраççĕ. Урнăна стенари шăтăка вырнаçтарнă хыççăн виçĕ хутчен орудисенчен персе яраççĕ, траурлă марш вырăнне оркестр «Интернационал» выляса ярать. Çав минутăра площадь тĕлĕнче боевой самолетсем вирлĕн вĕçсе каяççĕ,—çапăçусенче нихăçан манми чапа тухнă сталинла авиаци хăйĕн паттăр юлташне Марина Михайловна Раскована юлашки хут ăсатать. Раскован ячĕпе сăнĕ ĕмĕрлĕхе пирĕн халăхăн чĕрипе асĕнче юлĕç. (ТАСС).

Ыйтусемпе ответсен вечерĕ

Çак кунсенче Н-ски заводри çамрăксемпе комсомолецсен ыйтусемпе ответсен вечерĕ пулчĕ. Вечер питĕ интереслĕ иртрĕ. Завод директорĕ, партбюро секретарĕ, завком председателĕ Шунникова, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Трусова юлташсем пурĕ 100 ыйту çине ответ пачĕç.

Вечер заводри комсомолецсемпе çамрăксем чылай ыйтусемпе интересленнине, вĕсен тавракурăмĕ ӳссе пынине кăтартрĕ. Унпа пĕрлех вечер заводри комсомол комитечĕн ĕçри çитменлĕхĕсене те палăртрĕ.

Н-ски заводри пек ыйтусемпе ответсен вечерĕсене ытти предприятисенче те ирттермелле.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ХУЛАРА

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ. (ТАСС спецкорĕ). Киров ячĕпе тăракан урам тăрăх хĕвеланăç еннелле вĕçĕ-хĕррисĕр совет чаçĕсем иртсе пыраççĕ. Халăх хăйне ирĕке кăларакансене çав терн пысăк савăнăçпа кĕтсе илет. Моздокра пурăнакансем пĕр-пĕринпе ăмăртса красноармеецсене киле чĕнсе кĕртеççĕ те чей ĕçтерсе хăналантараççĕ, вĕсене фашистла режимăн тискерлĕхĕсем çинчен каласа параççĕ.

Ак çакăнта, Фомин урамĕпе Базарная площадĕн кĕтессинче, аманнă политрука çакса вĕлернĕ. Киров урамĕнчи çуртсенчен пĕринче гитлеровецсем аманнă пирки тыткăна лекнĕ 25 красноармееца персе вĕлернĕ. Хăйсен кунçулĕ вĕçленсе пынине туйса, нимĕçсем юлашки кунсенче уйрăмах тискерленнĕ. Декабрĕн 25-мĕшĕнче вĕсем хула тулашĕнче советăн 30 гражданинне персе вĕлернĕ. Çакăн хыççăн часах Троицкий хуторĕ патне мирлĕ пурăнакан тата темиçе вуншар çынна илсе тухнă та персе вĕлернĕ.

Совет боецĕсем Моздокра тыткăна лекнĕ красноармеецсене ирĕке кăларнă. Çак çынсем хăрушă вăхăта пурăнса ирттернĕ. Тыткăна лекнисене тискер кайăкла хĕнесе пĕтернĕ, вĕсене апат çимĕç паман. Çынсем выçăхса тата чир-чĕре пула вилнĕ. Вилнисем эрниэрнипе чĕрĕ çынсемпе пĕр çуртрах выртнă. Лагерь коменданчĕ унта хупнисене асаплантарнă, лагерьте пулнă хĕрарăмсенчен мăшкăлланă. Хулана тата ун çывăхĕнчи колхозсене çаратса пĕтернĕ.

Хулана паллама та çук. Пур çĕрте те ванчăксем кăна. Сайра çуртсем кăна малтанхи пекех сыхланса юлнă. Киров урамĕнче пур çуртсен чӳречисемпе алăкĕсене те çĕмĕрсе пĕтернĕ, урайĕсене аркатнă. Ытти урамсенче те çакнах курма пулать.

Моздокра пурăнакансем, хăрушă вăхăт иртнĕ хыççăн, ирĕклĕн сывласа ярса ĕçе тытăнаççĕ, гитлеровецсем хулана кӳнĕ сурансене тӳрлетеççĕ.

Нимĕçсем пункт хыççăн пункт хăварса каялла чакаççĕ, вĕсене пирĕн чаçсем малалла хăваласа пыраççĕ.

1943 çулшăн государствăна аш-какай параççĕ

ШАМАРША. Районри колхозсем государствăна 1943 çулшăн аш-какай пама тытăнчĕç. Халăхсен ирĕклĕхĕпе чысĕшĕн хаяр çапăçу пынă вăхăтра пирĕн колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татма тăрăшаççĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз государствăна 1943 çулхи обязательство шучĕпе 27 центнер аш-какай пачĕ. Çавăн пекех «Триер», Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем те государствăна 12—14-шар центнер аш-какай пачĕç. Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз 1943 çулта памалли аш-какая пĕтĕмĕшпех парса татрĕ.

М. ВАСАН.

—О—

Пĕлтерӳ

Январĕн 15-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Парткабинетăн лекцисем вуламалли залĕнче (Чувашская ур., 6) агитаторсем валли инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми:

«19 çул Ленинсăр — Ленин çулĕпе».

Доклада ОК ВКП(б) пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕн заместителĕ Сдобнов юлташ вулать.

ВКП(б) ГОРКОМĔ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Доводится до сведения семей начсостава, получающих от Чебоксарского Горвоенкомата пособие в порядке приказа НКО № 140—1942 г., о том, что им надлежит получить в уличных комитетах (по месту жительства) справки, заверенные в Горсовете, о составе семьи с указанием: степени родства, фамилии, имени и отчества, времени рождения.

Указанные справки должны быть предоставлены в Горвоенкомат в день получения пособия за январь м-ц.

Без представления указанных справок пособие выдаваться не будет.

Горвоенкомат.

Чувашскому Республиканскому Отделению Сортсемовощ НКЗ РСФСР требуются:

Для работы в гор. Чебоксарах — заведующий складом.

Для работы в гор. Канаше — старший агроном, агроном-качественник и старший бухгалтер.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, дом № 7, Сортсемовощ. Тел. 6—55.

Тархановский лесоучасток Росглавпиво продает дубовую клепку организациям и артелям. Цена по прейскуранту.

Адрес: Тарханы, Первомайского района.

РОСГЛАВПИВО.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 023 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. б. 58. 84 п.